163
29-58

И. В. ИСАЕВ

ВУЛАМАЛЛИ ҪУРТРА ХАҪАТ-КӖНЕКЕПЕ МЕНЛЕ ӖҪЛЕМЕЛЛЕ

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттелстви
1929

И. В. ИСАЕВ

ВУЛАМАЛЛИ ҪУРТРА ХАҪАТ-КӐНЕКЕПЕ МӐНЛЕ ӐҪЛЕМЕЛЛЕ

СССР-ти Халӑхсен Тӗп Истаттӗлстви
Мускав 1929

Главлит № А 29946
Тираж 1500 экз.

Заказ № 2742

I. Хаçат усси.

Хальхи вăхăтра хаçат питĕ усăллă, кирлĕ йапала. Вăл кунтан-куна пире хамăр килçуртран йертсе тухса, пĕтĕм тĕнӳере мĕн пулнине, хресӳенсемпе рапоӳисем, тата пуршуйсем йепле пурăннине кăтартса параŭ. Хаçат кунтан-куна ӳркенмесĕр килти ĕçсене тума, патшалăхри халăх ĕçĕсене майлаштарма ӳĕнет, астутараŭ, вĕрентет. Хаçат кунтан куна вулакансене пĕр-пĕрин пурăнăçĕ çинӳенпĕлтерет, пĕр-пĕрне инкек-синкекре пулăшма май кăтартса параŭ, Пĕтĕм Сойусри, пĕтĕм тĕнӳери ĕçхалăх пурăнăçĕпе пурăнма вĕрентет. Хаçат—саланса, тем-тĕрлĕ хула-йалсенӳе пурăнакансене пĕрлештерсе, кирлĕ ĕçе пĕр вăхăтра тума, хăйсен сассине, ирĕкне пĕр çын пек пама вĕрентет.

Ӳăваш хрĕçӳенĕн çирĕп ӳăмăрне курма, çивӳĕ сассине илтме йут патшалăхри пуршуйсем, улпутсем хаçат урлă анӳах пултараççĕ. Хаçат урлă анӳах пĕтĕм тĕнӳери рапоӳӳисем, хресӳенсем пĕр-пĕрне сасă парса тăраççĕ;

пĕр-пĕрин хутне кĕме пултараççĕ. Хаçат урлă епир хамăр хушăмăрти сийенсене пур те курмалла, иртмелле туса, тымарĕпе çăлса кăларма пултаратпăр. Хаçат пире çĕнĕ, кирлĕ пĕлĕшӳсене каласа анӷах мар, вăл пĕлĕшӳсене ытти çĕрте мĕнле вырăна кӳртсе, вĕсемпе мĕнле усă курнине те кăтартса пыраť. Хаçатра пĕлĕшӳпе ĕç пĕрмайăх пĕр-пĕрне пулăшса пĕрле пыраççĕ.

Çавăнпа хăçат ӷăваш ĕçхалăхне çĕнĕ, куӷттурлă пурăнăçпа пурăнма вĕрентес ĕçре— ӷи кирлĕ, хăватлă ĕçхатĕрĕ. Çавăнпа епир хаçат вулакансен хисепĕ тăрăх ăçта мĕнле пурăнаçпа, мĕнле шухăшпа пурăннине пĕлме пултаратпăр. Хăçат вулакансен хисепĕ тăрăх пирĕн вуламалли çуртсем йепле ĕçлени çинӷен те сăмах тытма нултаратпăр. Йалта халĕ пирĕн умра питĕ пысăк ĕçсем тăраççĕ. Йала ертеллĕ, копператсиллĕ пурăнăçпа пурăнма вĕрентес пулаť терĕ парттин 15-ш сйесĕ. Çак тем тĕрлĕ пысăк, йăвăр ĕçе тума ӷухăнсемпе вăтам хресӷенсене хăйсене вĕрентес, пулăшас пулаť. Каллех ку ĕçре те хаçатсăр пуçне, ытти çĕрте мĕнле ĕçлени, туни çинӷен вуласа пĕлмесĕр, парттин сйесĕ каланă сăмахĕсене ӷас вырăна кӳртме питĕ хĕн пулаť.

Çавăнпа хреçӷенсем хушшинӷе ытларах хаçат салатас ĕç, хаçата тĕплĕ, ăнланса вулама вĕрентес ĕç йалти вуламалли çуртсемшĕн пирвайхи ӷи пысăк ĕç пулмалла.

II. Хресҫенсем ытларах хаҫат ҫырӑнса илҫӗр тесен, испаҫӑн мӗн тумалла?

Испаҫӑн хресҫенсен пурӑнӑҫне аван пӗлсе тӑрас пулаҫ.

Пуринҫен малтан хресҫенсене хаҫат уссине кӑтартас пулаҫ. Хреҫҫен—хаҫат ӑна мӗнле ӗҫре, мӗнле пулӑшма пултарнине пӗлсен, хӑйех ҫырӑнса пулӗ, ытти сене те ҫырӑнса илекен пулӗ. Вара испаҫа та пулӑшма пултарӗ.

Хаҫата хресҫенӗн шухӑшӗпӗн, унӑн ӗҫӗпӗн ҫывӑх тӑвас тесен, испаҫӑн мӗнле вӑхӑтра йал мӗнле шухӑшпа пурӑннине пӗлес пулаҫ. Мӗнле кассем мӗн ҫинҫен тавлашнине, йе мӗн ҫинҫен пӗлме тӑрӑшнине сиссе тӑрас пулаҫ. Ҫухӑн, вӑтам хресҫенсем мӗнле нушапа хуйхӑрнине, йалти ӗҫсем ҫинҫен пӗрпӗрин хушшинҫе мӗн канашланине вӑхӑтра пӗлсе тӑрас пулаҫ. Йалта вӑхӑҫӗ-вӑхӑҫӗпе

кĕтмен çĕртен сиксе тухакан хыпарсене те, ĕçсене те (сикекен ҫир, вут-кăвар, сут, т. ыт.) манас пулмасть. Çак йалти ĕçсене те пĕлсе тăрас тесен, испаҫăн пĕрмайах йалта халăх хушшинҫе çаврăнас пулаҫ, пурне те тенĕпе пĕрех килтен пĕлсе тăрас пулаҫ. Кампа мĕн çинҫ и, мĕнле сăмах пуçласа йамаллине пĕлес пулаҫ. Испаҫ çапла йалти арçынсене, хĕрарăмсене, ваттисене, çамрăксене, вĕсен пурăнăçне, килти, йе йалти ĕçсем çинҫен вĕсем мĕнле канашланине аван пĕлсе тăрсан анҫах хаçатра вĕсене мĕн кирлине пĕлме пултараҫ. Хаçатра кама мĕн кирлине пĕлсен анҫах испаҫ хаçат хресҫеншĕн çывăххине, усăллине аван кăтартма пултараҫ. Вара хресҫен хаçат йенне çывхарсан, ăна пирĕн Сойусри пĕтĕм ĕçхалăхен пурнăçĕ, йе ытти патшалăхри ĕççыннисен пурнăçĕ патне çывăхартасси питех хĕн пулмĕ. Хресҫен хаçат урлă хăйĕн килти, йе йалти ĕçĕсене ăнланма пĕлекен пулсан, пĕтĕм кĕпĕрнери, йе патшалăхри ĕçсене те ҫасах ăнланакан пулĕ. Партти, йе Совет власĕ хушнă ĕçсене те ҫасах ăнланакан пулĕ. Ҫухăнсемпе вăтам хресҫенсем, кулаксем елекленине итлемесĕр, партти каланă пек—пĕрле ушкăнпа çĕр-хир ĕçне те, йалти халăх ĕçне те ҫасах тума тытенĕç. Хаçата ытларах çырăнтарса илтерес тесен, испаҫăн çак каласа панă йĕркене йаланах астуса тăрас пулаҫ.

Плаккатсем çырса, хресҫĕнсене хаçат çинҫен астутарса тăрăс пулаҫ.

Малалла испаҫăн кунтан куна хресҫенсене хаçат çинҫен астутарса тăрас пулаҫ. Хаçат вĕсен ыйтăвĕсене, вĕсене халь кирлĕ йапаласем çинҫен каласа пама пултарнине пĕрмайах кăтартса тăрас пулаҫ. Испаҫăн сăмахпа каласа ăнлантарнă майпа тата хаçат çинҫен çырупа та (плаккатсемпе) астутарас пулаҫ. Хаçат вуласси, хаçат çырăнса илесси çинҫен темиçе тĕрлĕ плаккат çырма май пур.

1. Кашни хаçатра малтанах пайанхи ное мĕрте мĕн çинтен мĕнле статйасем пуррин кăтартаççĕ. Çак кăтартнă статйасенҫен, хыпарсенҫен йалти хресҫенсене пуринҫен малтан кирлисене суйласа илес пулаҫ те, плаккат çине çырас пулаҫ. Хаçат пуçламĕшĕнҫе мĕнле статйасем пуррине кăтартман пулсан испаҫ хăй те суйласа илме пултараҫ.

Сăмахран каласан, плакката ак çапла çырма пулаҫ:

Пайан илнĕ хаçатсем ак мĕн çинҫен пĕлтереççĕ:

«Çуракине йепле ирттермелле»

«Траххом ҫирĕнҫен Совет влаçĕ пурне те, тӳрлетмелле тунă»

«Лайăх лаша мĕнле ӳстересси»

«Тăх-ҫĕп усси»

2. Плакката тата вулакансем патне ыйтса та çырма май пур. Кун пек плаккат хаçата

вулиҫҫенех шухăтлаттараҫ. Ку плакката примĕршăн çакăн йевĕрлĕ çырма пулаҫ:

«Пĕлетĕн-и есĕ тырра вутпуççирен мĕнле хăтарасси çинҫен?»

Кам пĕлет—кăçал мĕнле çуркунне пулаҫши?»

«Ăнланатăн-и есĕ: пирĕн телекатсем ытти пашшалăхсене вăрçă çинҫен мĕн калаççĕ?»

«Илтни есĕ — Америĕк пирĕн ылттăна арĕслени çинҫен?

Савсене пĕлес тесен, вула çак хаçата (йатне кăтарт)! Хресҫенсем вуламалли çурта пыма вĕренсе çитмен пулсан, ун çинҫен плаккат çинҫех кăтартас пулаҫ — «хаçат вулама вуламалли çурта кĕр!»

3. Плаккат çине тӳрех хаçатра мĕн вуласси çинҫен çырма та йураҫ. Пуринҫен ытла кирлĕ статйăсене суйласа илес пулаҫ те, плаккат çине çапла çырса хурас пулаҫ:

Йулташ! Пайан илнĕ хаçатсенҫе кирек мĕнле пулсан та, çак статйăсене вуласа пăх. «Торонин хресҫен хаçата ыйтса çырни. Хăçат ăна хирĕç мĕн çыраҫ»

Хресҫен хуçалăхне çĕклеме панă 717 мĕлйун тенкĕ укçана мĕнле вырăнлă салатасси çинҫен.

«Хĕрлĕ квартире пулнă хресҫенсен хуçалăхĕсене пулăшу параççĕ».

4. Унтан тата плаккат çине, йе йури хатĕрленĕ сăрланă хăма çине кĕскен çĕнĕ хы-

парсем (телекрамсем) çинҫен çырма та май пур. Кĕске хыпарсем кашни хаçатра пур. Ку плакката çапла çырмалла:

Пайнхи хаçатсем çапла çĕнĕ хыпарсем илсе килҫĕç:

«Опçерваттори калана тăрах кăçал çуркунне ир пулаҫ, çурхи шыв ытлашши пулмасҫ.»

«Америĕкрен Отессă хулине 1280 трактăр килнĕ.

«Тонпасра (çĕр кăмрăк кăларакан çĕрте) контр-революционерсем майлă ĕçлекен иншенерсемпе техниксене арĕсленĕ.

«Кăçал РСФСР-ти аслă шкулсене 19315 çын вĕренме илмелле».

Çакăн пек плаккатсене тата урăх тĕслĕ те çырма май пур. Испаҫ хăй ĕçне сăнанă тăрăх, йалти çынсене пĕлнĕ тăрăх, тата авантарах, хресҫен ҫĕрине кăмăллăрах плаккат çырма пултараҫ. Анҫах ку ĕçе тума пĕрмайах вĕренес пулаҫ, ун çинҫен йаланах шухăшлас пулаҫ.

Плаккатсене çырнă тух çакна астăвас пулаҫ: плаккатсене пысăкрах хут çине, пысăк саспалисемпе çырас пулаҫ. Саспаллисене палла, илелмĕрех çырас пулаҫ. Вулакана кирлĕ сăмахсене ытти сăмахсенҫен пысăкрах саспаллисемпе çырас пулаҫ, йе ку сăмахсен саспаллисене тĕслĕ кăранташпа, тĕслĕ краскана çырас пулаҫ. Çапла çырнă плаккатсене хресҫенсем пухăнакан, йе ҫас-ҫасах пыракан вырăнсене (йалсоветĕ, кооператси лавкки, т. ы.) пурте курмалла çĕре çапас пулаҫ.

Пĕр вăхăта пĕр тĕслĕ плаккат антӑах çапас пулаҫ. Анӑах пĕр плаккатах питĕ нумăй вăхăт çакăнтарса тăратас пулмасҫ, ун вырăнне çĕнĕ, тепĕр майлă çырнă плаккат çапас пулаҫ.

Испаӳăн ĕçĕ плаккат çырнипе анӑах пĕтмест. Мĕнле плаката кам вуланине, кама мĕнле плаккат кăмăла килнине унăн пĕр майах сăнас пулаҫ. Плаккат пулăшнипе кам хаçат вулама вуламалли çурта пынине, йе хаçат çырса илме пуçланине курса тăрас пулаҫ. Ун çинӑен вуламалли çурта çывăх тăракан хресҫенсемпе ӳас-ӳасах каласас пулаҫ. Халиӳӑен çырнă плаккатсем сахал пулăшаççĕ пулсан, ку ĕçе мĕнле тата авантарах майласси çинӑен шухсемшлас пулаҫ, каллех хресҫен хушшинӑе калçса тата мĕн тумаллине сăнас пулаҫ.

Ҫтена хаçатне сырма вĕренес пулаҫ.

Хаçат вулама, хаçатшăн тăрăшма, çырăнса илме тата авантарах ҫтена хаçаҫĕ вĕрентет. Ҫтена хаçаҫĕ—йалхаçаҫĕ хреҫӑене çывăх хаçат. Çăваппа ҫтена хаçаҫĕ çине пуринӑен ытла йал пурнăçĕ çинӑен çырма май пур. Ҫтена хаçаҫĕ çине йалти пысăк ĕçсем çинӑен анӑах мар, (советпа кооперацсийе суйласси; налук тӳлесси, тыр-пул, пахӳă-çимĕç акасси, т. ы.), пĕр-пĕр урамри, килти пĕтĕк ĕçсем çиниӑен те çырма йураҫ (усĕр-çапăçу, хĕрарăма пусмăрлани, кулак ӳухăнсене хăй ăллине йарса илесшĕнни, т. ы. т.). Ҫтена хаçаҫĕ çине Ленин йулташ, партти—йал

пурнăçне сотсиалисăм йенне йепле йарасси çинҫен вĕретнине çырас пулаҫ, анҫах йаланах çак вĕрентĕве вырăна кӳме йалта мĕн тума тытăннине, мĕнле тунине сăнаса кăтартас пулаҫ: ҫухăнсемпе вăтамсем ушкăнпа машшинă илеççĕ, пĕрлешсе ушкăнпа сухаака тăваççĕ, тыр-пул акаççĕ; ушкăнпа çĕре пĕр çĕре таттараççĕ, аван, таса вăрлăх илеççĕ; навус тăкса, ир хытсуха туса тырă тухăçлăхне ӳстереççĕ. Халĕ ҫухăнпа вăтам хресҫенсен хуçалăхне ӳстерсе, пĕрлештерсе пыракан ĕççем çинҫен, кооператси ĕçĕсем çинҫен, вăл ҫухăнсене пулăшни çинҫен ҫасҫасах, питĕ тĕпҫесе çырас пулаҫ. Ытти йалсенҫи (йунашар йалсенҫи) çакăн пек ĕççем çинҫен те çырсан аван. Çапла, йалти çтена хаçаҫĕ сăмахпа анҫах мар, тунă ĕççемпе кăтартса, хаçатăн уссине тата авантарах палăртма пултараҫ. Çакăн пек çĕр ĕçĕ çинҫен, хрĕсҫенсен пĕрлешсе ĕçлемелли çинҫен статйасем çырма акрономсене те пулăшма ҫĕнес пулаҫ (акроном вырăс пулсан, унăн статйисене ҫăвашла куçарма та йураҫ). Йалхуçалăх крушокĕ мĕнле ĕçлени çинҫен, вăл хăйĕн ҫленĕсене хресҫен ĕçне урăхла, наукка хушнă пек тума пулăщшине каллех ĕç тăрăх кăтартас пулаҫ.

Йалсҫвеҫĕ, пулăшу комитеҫĕ мĕнле ĕçлени çинҫен, вĕсем ҫухăнсем хутне мĕнле кĕни çинҫен, тухăнсем вăтам хресҫенсемпе йепле пĕрлешсе кулаксене хирĕç ĕçлени çинҫен çырас пулаҫ.

Йалти шкул ĕҫĕсемпе хута вĕренесси çинҫен, йалти ҫирсене йепле пĕтерсси çинҫен çырас пулаҫ. Кунта каллах уҫиттĕлсене, тухтăрсене, йе хвершăлсене пулăшма ҫĕнес пулаҫ.

Хамăр патшалăхри, йе ытти патшалăхсенҫи хыпарсем çинҫен çтена хаçаҫĕ çине питĕ кĕскен çырмалла. Кун пек хыпарсене йалти ĕҫсенҫен пуçнехи пысăк кирлĕ ĕҫсем çинҫен хресҫенсене çырăнса илнĕ хаçат урлă вуласа пĕлме вĕрентес пулаҫ.

Çтена хаçаҫĕ çине кирек мĕн çинҫен те пысăк статйасем çырас пулмасҫ.

Хресҫеншĕн кĕске статйана вулама хĕн мар, ăнланма та йăвăр мар. Вăрăм статйана сайра хресҫен вĕçне çитиҫҫенех вуласа тухма пултараҫ. Çтена хаçатне вулама çăмăл пултăр тесен, статйасене кĕнекесене çапакан саспаллисемпе çырас пулаҫ. Хаçат пайĕсене пĕр-пĕринҫен авантарах, илемлĕрех уйăрас пулаҫ.

Мĕнле статйа мĕнле пайа кĕни курăнса тăтăр („умĕнхи статйа“, „кĕске хыпарсем“ „хресҫен хуçалăхĕн аслă çулĕ“, „йалти кĕсенем,“ кулăшпа куççулĕ“, „ камăн мĕн астумалла“, т. ы.) Хаçат куçа паллăрах курăнмаллă, илемлĕрех пултăр тесен, пĕҫĕкрех карттинăсем çырсан питĕ аван. Йалти кулăшлă ĕҫсем çинҫен çырнă карттинăсене йалта ҫасҫасах пур те пĕлеççĕ, пĕр-пĕрин хушшинҫе пухăнса кулаççĕ.

Анҫах кулашлă, йĕ сийенлĕ ĕҫсем çинҫен кулас анҫах пулмасть, çавăнтах вĕсене мĕнле майпа тӳрлетесси çинҫен те кĕскен çырас пулать. Йалта никам та çтена хаçатĕ валӗи пĕр наҫар карттинккă та çыра пĕммест пулсан, ытти хаçатсенҫен, йе шурналсенҫен касса илсе çыпăçтарсан та йураť.

Хаçатăн пайĕсем йаланах пĕр пĕк пулмаççĕ: пĕр вăхăтра пуринҫен ытла пĕр йенне хытăрах кăшкăрас пулать, тепĕр ҫухне тепĕр йенне. Партти хушнă ĕҫсемпе йалти пурăнăҫа шута илсе, хăш ĕҫ çинҫен хытăрах калаçасси çинҫен йаланах астуса тăрас пулать. Йалти ĕҫсем, хыпарсем урлă йала партти калана сăмахсем йенне çывхартас пулать, партти хушнă ĕҫсем урлă йалти ĕҫсене, пурăнăҫа пурин те курмалла, ăнланмалла тăвас пулать. Çтена хаçатне вулама хресҫенсене авантарах вĕрентес тесен, ăна палла, пурте курмалла çĕре (вуламалли çурт, йалсовеҫĕ, конператси, т. ы. те.) çапас пулать. Пĕр вăлăтлăха, пĕр вырăна, тепĕр вăхăтлăха тепĕр вырăна çапма та йураť. Унтан тата, сайра хутран, çтена хаçатĕсемпе йалпа йалăн пĕрмайах улăшăнас пулать. Вулăсри йалта кăларакан хаçата вулăсри вуламалли çуртсем тăрăх çӳретсен тата аванрах, мĕншĕн тесен вулакансем ытти йалсенҫе, вулăсра мĕн пулни çинҫен пĕлнинҫен пуçне, ытти çĕрте мĕнле хаçат кăларнине кураççĕ, хăйсен йалĕнҫи хаçатне авантарах кăларма пулăшма та пултараççĕ.

Çапла плаккатсем, ҫтена хаҫаҭӗсем пулӑшнӑ майпа хаҫат вулама, ҫырӑнса илме шухӑшлакан хресҭенсене пӗлсе тӑрас пулаҭ, унашкал хресҭенсене вӑхӑтра курса, хаҫат ҫырӑнса илме пулӑшас пулаҭ.

Токлатсем тӑвас пулаҭ, акитатсиллӗ ҫутсем лартас пулаҭ.

Халиҭҭен епир хаҫатшӑн хут, ҫыру урлӑ йепле тӑрӑшасси ҫинҭен каласа патӑмӑр. Анҭах халиҭҭен калакисене туса пынӑ ҭух испаҭӑн сӑмахпа каласа ӑнлантарас ӗҫе те манас пулмасҭ. Хаҫат ҫинҭен йӑласоветӗ, пулӑшу комитетӗ сасетанӑйисенҭе, хӗрарӑм телекаҭӗсен пӳхӑвӗсенҭе вӗренме ҫӳрекен аслӑ ҫынсем хушшинҭе каласас пулаҭ. Сайра хутран хаҫат пирки акитатсиллӗ сут тусан та пит аван. Сутитлессе хаҫат вуламасӑр пурӑнакан хресҭене сутитлемелле (йатне, хушаматне шухӑшласа кӑларас пулаҭ). Ҫвитеттӗлсем кӑтартнӑ тӑрӑх вӑл хаҫат вуламаннине, вӑл кивӗ тӗттӗм пурнӑҫшӑн анҭах тӑрӑшнине курӑнса тӑмалла тӑвас пулаҭ: наҭар вӑрлӑхпа тырӑ акни, хыт сухана кайран туни, кошератси ҭленне кӗменни, хӑйӗн наҭар пурнӑҫне хӑй пӗлмен пирки—аванлатайманни, тарӑхни, кулак аллине лекни, т. ыт. тӗттӗм вырӑнсем те курӑнса тӑҭҭӑр. Вара айӑплаканӑн—хаҫат нушаран мӗнле тухса, ҫӗнӗ ҫӑмӑл пурнӑҫпа пурӑнма вӗрентнине, вӑл ҭухӑн хресҭене кулак пусмӑрӗнҭен йепле хӑтӑлма пулӑшнине кил-ҫуртри сийенсене (сӑмакун, ҭир,

т. ы.) сирме пулăшнине авантарах каласа парас пулаҫ. Сутитлеме çынна анҫах мар, хаçата хайне те сута пама пулаҫ.

Акитатсиллĕ сута ирттерме пит тĕплĕ хатĕрленес пулаҫ. Сутра кам мĕн каламаллине малтанах пĕлсе тăрас пулаҫ. Сут çинҫен малтан сутйапа калаçса пăхсан та аван. Сута итлеме нумайрах халăх пухма тăрăшас пулаҫ, çавăнпа сута праçнĕк кунĕ тавас пулаҫ, йалти çынсене авантарах пĕлтерес пулаҫ.

Сут пĕтсенех хаçат çырăнса илме шухăшлакан хресҫенсене ҫĕнсе, йаҫĕсене çырма йураҫ; çав сут хыççăн çырнă списсăк тăрăх пухăннă укçана испаҫ хаçата урăх кунсенҫе те йама пултараҫ.

III. Испаҫăн хресҫенсене хаçат вулама вĕренме те пулăшас пулаҭ.

Хресҫенсене хаçат вулама вĕрентес ĕç испаҫшăн тата йăвăртарах ĕç. Хаçат вулăсси тин тытăнаканшăн çăмăл ĕç мар, мĕншĕн тесен хаçат нумай çĕнĕ вырăнсем, йатсем çинҫен асăнаҭ; нумай хыпарсем çинҫен пурте пĕлекен хыпарсем пек каласаҭ. Тин хаçат вулама тытăнакан ăçтан пуçласа, хăйне кирлине тупса вулама та ҫасах пĕлмест. Çавăнпа ăна вăхăтра никам та пулăшмасан, вăл хаçатран писме те пултараҭ. Хаçат çырăнса илтересшĕн тăрăшни вара ахалех сайа кайма пултараҭ. Анланса вулама пĕлсе çитнĕ хресҫен анҫах хаçатăн уссине аван пĕлсе тăма пултарат; вăл вара хăйех, никам хушмасăрах, никамран астутарасса кĕтмесĕрех хаçата çырăнса илсе вулакан пулаҭ.

Ушкăнпа пурте илтмелле вулас пулаҭ.

Çавăнпа хаçат вулама пирвай тытăнакансемпе хаçата пĕрле пухăнса, пурте илтмелле вулама тăрăшас пулаҭ.

Итлеме йышланрах пухăнҫҫăр тесен, малтан сайрарах — ернере пĕр, йе икĕ каç анҫах вуламалла. Вуламалли вырăн итлекенсемшĕн сывăхрах пултăр. Итлеме вуламалли çурта пухăнсан пит аван та, анҫах тӳрех унта пухăнасси çине нумайах шанҫăк çук пулсан, пĕр-пĕр хресҫен килĕнҫе, çула—урамра та вуласан йураҫ. Çакăн пек итлекен ушкăнсем йалта темиçе те пухма йураҫ, анҫах вăй ситнĕ таран пухас пулаҫ, вулакансен хаçат вулама аван хатĕрленес пулаҫ.

Хаçат вулама тин тытăнакансемшĕн вуланă ҫух хаçата пуçламĕшĕнҫен тытăнса вĕçне çитиҫҫенех нихçан та вулас пулмасҫ. Итлекенсен кăмăлне килмелле пĕр-ик шухăш илсе, ăна пур йенҫен те кăтартса, вувуласа ăнлантарса парас пулаҫ. Çапла вулама вулакана мĕн кирли пĕтĕмпех çук пулсан, урăх хаçатран та илсе вулама йураҫ. Анҫах вулаканăн итлекенсемшĕн мĕн кăмăллă пулассине малтанах пĕлес пулаҫ. Ăна пĕлес ҫесен, итлекенсем пуринҫен ытла мĕн çинҫен пĕлесшĕннине тĕпҫес пулаҫ. Халь, калана пек вулама тытăнсан, итлекенсен шухăшĕ вырăнтан вырăна, йалан çĕнĕ йапаларан çĕнĕ хыпар çине вĕçкелесе пымасҫ, пĕрмайах пĕр кăмăллă шухăша анҫах тĕпҫесе пĕлесшĕн. Тин вулама тытăнаканăн пуç мимине нумай тĕрлĕ шухăшсемпе тӳрех çĕртме тытăнсан, вăл пĕр шухăшне те çителĕклĕ тĕплĕ ăнланаймĕ, ывăнасса хытăрах ывăнĕ. Çавăнпа мĕн вула-

ласси çинҫен йаланах авантарах шухăшлас пулаҫ, мĕн вуламаллине малтанах шутласа хурас пулаҫ.

Пайтах вăхăт иртсен тин, итлекенсем хаçатра мĕн çинҫен çырнине ҫасрах ăнланакан пулсан анҫах, хаçата пĕтĕмпех вулама тытăнма йураҫ. Анҫах кунта та пысăк статйасене йалан пĕтĕмпех вулас пулмасҫ; итлекенсемшĕн питех кирлĕ мар вырăнсене вуламасăхах хăварма та йураҫ. Каллех, мĕн вуламаллине, мĕн вуламасăр хăвармаллине малтанах шутласа хурас пулаҫ.

Итлекенсене ҫирвай пĕр-ик хаçат тăрăх анҫах ĕçлеме вĕрентес пулаҫ. Тӳрех нумай хаçат вулама тытăнсан, тĕплĕ вулама ҫасах вĕренме май çук.

Вуланă ҫух йут ҫĕлхерен илнĕ ăнланмалла мар сăмахсем тĕл пулсан, вĕсене çавăнтах ăнлантарса каласа парас пулаҫ, хăш ҫухне тӳрех вăл сăмахсем вырăнне ăнланмалла сăмахсем вулама та йураҫ. Вуланă ҫух тĕл пулакан хуласене, çĕр-шывсене кăтартма вулаканăн хăйпе пĕрле карттă пулсан пит аван, мĕншĕн тесен итлекенсем хула, çĕр-шыв йатне карттă çинҫе курсан ҫасрах та, тĕплĕрех те астăваççĕ. Итлекенсене карттăра—мĕн кирлине тупма хăйсене те йерипен вĕрентес пулаҫ. Вуланă ҫух васкас пулмасҫ, тытăнарах, пурте илтмелле вулас пулаҫ. Вуланă ҫух хаçатран пуçне итлекенçем çине те пăхкалас пулаҫ: вĕсемшĕн мĕн кăмăллă, мĕн йăлăхтараҫ,

çывăрттараҫ. Иăлăхтара пуçласан вулама пăрахас пулаҫ те, вуланни çинҫен каласма тытăнас пулаҫ. Кирек хăçан та вулани çинҫен кайран итлекенсене пĕр-пĕрин хушшинҫе калаçтарас пулаҫ, мĕншĕн тесен итлекенсене итлеме анҫах мар, хăй шухăшĕпе кирлĕ ĕçсем, йапаласем çинҫен шухăшласа тупма та вĕрентес пулаҫ. Хаçат пур йапала çинҫен те тӳрех татса пĕтерсе каласа памаҫ, çавăнпа хаçатра йаланах хăв тĕллĕн шухăшлама вырăн йулаҫ. Çав шухăшсене пĕр-пĕринпе калаçса пĕрлештарес пулаҫ, кам мĕнле ăнланнине каласа кăтартас пулаҫ. Анҫах калаçакансене йерипен, каласма ҫармасăр пĕр пекрех ыйтусем çинҫен, пайан вуланă ĕçсем çинҫен калаçтарма тăрăшас пулаҫ. Калаçма ирĕк парас пулаҫ, хăш-пĕр ҫух хресҫенех партти хушнине (пĕлмен пирки) хирĕç калаçаҫ пулсан та, хăй мĕн шухăшланине пĕтĕмпех каласа пама ҫарас пулмаҫ. Ун пек йăнăш шухăшсене тĕрĕс маррине калаçакансем хăйсемех шухăшласа пĕлҫĕр тесен, унашкал шухăшсене хирĕç çĕнĕ хыпарсем, çĕнĕ ҫыслăсем кăтартас пулаҫ, ĕлĕкхи пурнăçăн йăлисене, хурлăхне те астутарăс пулаҫ. Хăй шухăшне вулаканăн калаçакансем хăйсем ыйтсан анҫах каласа парас пулаҫ. Çапла вара итлеме пухăнакансем вĕсен шухăшĕсене ҫăтăмлă итленине, унтан кулманнине курсан, малалла хăймасăр ларма пăрахĕç, тата тĕплĕрех шухăшлама тытăнĕç, ытларах вулама

пуҫлӗҫ. Итлекенсен хушшинҫен пирвайхи вӑхӑтра кулака пӑрас пулаҫ, мӗншӗн тесен хӑйса ҫитиҫҫен ҫухӑнсем, тата вӑтамсем ирӗккӗн каласма хӑрама пултараҫҫӗ. Кайран ҫухӑнсемпе вӑтамсем пӗрлешсе, кулак ӑҫталла туртнине ӑнлансан, унӑн ӗҫӗсене аван сиссе ҫитсен, вӗсем кулака хирӗҫ пыма хӑймасӑр лармӗҫ вара.

Вулаканӑн итлекенсен ыйтӑвесене каласа ӑнлантарнӑ ҫух хӑй пит аван пӗлнисем ҫинҫен анҫах калас пулаҫ. Иккӗленекен пӗлмен йӑпаласем ҫинҫен пӗлнӗ-пӗлмесӗр каласа пулмасҫ. „Халь калама пултараймӑп, хам та аванах пӗлейместӗп, тепре пухӑнсан каласа парӑп“, теме те вӑтанса тӑрас пулмасҫ.

Анҫах ҫӗрле пухӑнса вуланине итлеме пырайманнисене те пулӑшусӑр хӑварас пуламасҫ. Ҫас-ҫасах вуламалли ҫуртран хаҫата киле те парса йама пулаҫ, анҫах вуламалли ҫурта хупмалли срукран ытлана мар. Хаҫата киле панӑ ҫух мӗне пирвай вуламаллине, мӗнле ӑнланма хӗн вырӑнсем пуррине каласа парас пулаҫ. Хаҫата кайалла тавӑрсан, мӗн вулани, мӗнле ӑнланни ҫинҫен, мӗн ӑнланмасӑр йулни ҫинҫен каласа пулаҫ. Тата мӗн ҫинҫен вуласа пӗлес килни ҫинҫен те ыйтса пӗлсе, малалла вулама пулӑшма тӑрӑшас пулаҫ. Ҫавӑнтах хӑйне хаҫат ҫырӑнса илме те ҫӗнмелле.

Йалта хресҫенсем, йе хӗрарӑмсем ӑҫта та пулсан пӗр-пӗр ӗҫпе пухӑнакан вырӑнсенҫе

пур те илтмелле хаçат вулама тăрăшас пулаҫ. Ун пек çĕрте ҫас-ҫасах хресҫенсем ахалех, пĕр ĕççĕр темиçешер сехет лараççĕ. Ахалех тавлашса лариҫҫен нумайшĕ хаçат вуланине итлеме хутшăнасран пăрăнас çук; ун пек ҫух вĕсем патне пырса хутшăнма анҫах пĕлес пулаҫ, вĕсем мĕн çинҫен тавлашнине итлесе тава хаçат хыпарĕсем йенне илсе пырса, вăл тавлашуллă ĕç çинҫен хаçат мĕн каланине вуласа кăтартас пулаҫ. Малалла вулама çăмăлтарах пулĕ вара. Нихçан та тӳрех пырса ларса хаçат вулама тытăнас пулмасҫ. Пухăннисен шухăшĕсене сиссе, мĕн çинҫен пĕлесшĕннине курса, хаçат вулама ирĕксĕр куçа кĕрсе йăлăхтармасăр тытăнас пулаҫ.

Хаçат вулама вуламалли çурта пыракансене тата авантарах пулăшма тăрăшас пулаҫ.

Вуламалли çурта пыракан хресҫенсене те пулăшас пулаҫ.

Пурте илтмелле вулассинҫен пуçне хăйсем тĕллĕн вулакансем валҫăи сĕтел çинҫе хаçат вуланă ҫух пур кирлĕ справоҫнĕксем выртни кирлĕ. Пуринҫен ытла хаçат вуланă ҫух йут ҫĕлхерен илнĕ сăмахсене каласа паракан словар кирлĕ. Унтан тата çĕр саккунĕсем, йе йалхуçалăх справоҫнĕкĕ йаланах ал айĕнҫе пулмалла. Çав справоҫнĕксем çинҫен кама мĕн кирлине тупма нур вулама пыракан хресҫенсене те вĕрентес пулаҫ. Ун синҫен пĕрерĕн, йе ушкăнăн вулама пуçлас умĕн каласа

парас пулаҫ. Çапах та вулакан ӑнланман вырӑнсене тӗл пулсан, ыйтса пӗлме испаҫӑн хӑй патне пыма хушас пулаҫ.

Вумалли çуртра çтена çинҫе йаланах кеокрахви картти çакӑнса тӑмалла. Хаçат вулакансем карттӑ çинҫе кирлӗ хуласене, йе çӗршывсене ҫасрах тупма пултарҫҫӑр тесен, кашни кун пайанхи хаçатри пысӑк хыпар вырӑнӗсене, пулавккӑ çине тӑхӑнтарнӑ тӗслӗ флакпа кӑтартас пулаҫ. Пулавккӑ пулмасан тӗслӗ хутран стрелккӑ туса, çав стрелккӑпа кӑтартма йураҫ.

Кампанисене авантарах ирттерме вӗренес пулаҫ.

Çулталӑк тӑрӑшшӗпе пекех пирӗн патшалӑхӑн вӑхӑтлӑллӑ ӗçӗсем (кампанисем) пулаççӗ. Кӗркунне умӗн налук кампанийӗ пуçланаҫ, налукпа пӗрлех тырӑ илсе пуçтарас ӗç тапранаҫ. Нумай пулмасҫ хресҫен сайомне салатас кампанийӗ ирттермелле пулҫӗ. Советсене, йе кооперацисене суйламалли кампанисем пулаççӗ. Çавӑн пек ӗçсене испаҫӑн вӑхӑтра курас пулаҫ. Вӗсене курасси хӗн мар — ҫентӑрти хаçатсене—„Правда“, йе „Известийе“ йе „Беднотана“ çеç авантарах сӑнаса вулас пулаҫ. Вӑл хаçатсем ун пек пысӑк кампани ӗçӗсем çинҫен пӗрмайах çырса пыраççӗ. Çав кампани çинҫен пӗр хресҫен те пӗлмесӗр ан йултӑр тесе, испаҫӑн тӑрӑшас пулаҫ, мӗншӗн тесен мӗн ҫул ҫухӑн-вӑтам хресҫенсем Совет влаçӗ ӗçӗсем çинҫен аван пӗлсе тӑраç-

çĕ, çавăн ҫул кулаксен ултавĕ халăх хушшинҫе сахал вырăн йышăнма пултаҫаҫ.

Вуламалли çурта пыракан хĕресҫен çав халь пыракан каммпани çинҫен маларах пĕлтĕр тесен, испаҫăн курăнмаллăрах вырăна пĕлтерӳ-плаккат çакас пулаҫ. Çак пĕлтерӳ-плаккатăн пуçламĕшне çапла çырма йураҫ. «Йаракасси хресҫенĕ»! (хай йалĕн йатне çыраҫ).

«Асту, пĕлмесĕр ан йул»!

«Кăçал налук ак мĕнле пулаҫ:»

Çакăн пек пуçламăш айне налук çинҫен хаçат çине çапнă паллă статйасене, текретсене, инструктсисене хаçатран касса илсе çыпăçтарас пулаҫ. Унтан, йала налук мĕн ҫухлĕ тивнине, ҫухăнсне йепле çăмăллăх панине кăтартас пулаҫ. Çавăнтах тиакраммă çырса, йал кашни çур уйăхра мĕн ҫул тӳленине кăтартса пыма йураҫ. Тиакраммă çапла тума йураҫ:

Тиакраммăра $19^{1}/_{2}$ уйрăм. Кашни уйрăм 100 тенкĕ тӳлемеллине пĕлтерет. Пĕтĕм йал налукĕнҫе аллăран сахалтарах ҫысла пулсан, ăна кăларса пăрахсан та пăсмасҫ. Тӳленĕçемĕн тиакрамма хуратса пырас пулаҫ.

Çакăн пек пĕлтерӳ-плакката ытти каммпанисене ирттернĕ ҫух çырса çапсан та пиҫ аван пулаҫ. Ана каллех таса, илемлĕ саспаллисемпе çырас пулаҫ.

Каммпанисене ирттернĕ ҫух парттин 15-ш сйесĕ йал ĕçĕ çинҫен каланисене пĕрмайах

астăвас пулаҫ. Кунтан куна, йеринен ҫухăнпа вăтамсĕне йаланах копператси йенне, ушкăнпа суха-ака тума, тĕрлĕ машшинă пĕрле çырăнса илсе, çĕре ушкăнпа майлас йенне туртас пулаҫ. Совет влаçĕ вăл ушкăнлă ĕçе мĕнпе пулăшма пултарнине те кăтартас пулаҫ. Пĕҫĕк, машшинăсăр, навуссăр, наҫар вăрлăхпа акса тырă тăвакан хуçалăх усăллă маррине вăл упыткăллине пĕрмайах астутарас пулаҫ.

Сайра хутран хаçат вулакансем авантарах пĕлесшĕн йапала синҫен тавлашу тума та йураҫ. Хаçат вулакансенҫен пĕрне пĕҫĕкрех токлат тутарас пулаҫ, ыттисем (итлекенсем) кайран хăйсем мĕнле шухăшлани çинҫен каласа паҫҫăр. Çапла, йеринен хаçат вулакансене пĕрле пуçтара-пуçтара каласт арсан, вĕсем вара крушокра ĕçлеме те нумайĕшĕ хирĕçмĕç. Ҫи пирвай йалхуçайлăхне аванлатасси, хресҫен хуçалăхне çĕнĕлле йĕркелесе тупăшлă тăвасси çинҫен тавлашусем тăвас пулаҫ. Вара хресҫенсем валҫи пуринҫен малтан йалхуçалăх крушокĕ уçма май пулĕ. Çак крушок ĕçне майласси çинҫен акрономпа каласас пулаҫ.

Вуламалли çуртăн справкăсем пама вĕренес пулаҫ.

Хаçат тĕлĕшĕпе испаҫăн халиҫҫен каланисенҫен пуçне тата пĕр пысăк ĕç пур. Çак халиҫҫен каланă ĕçсене туса пынă ҫух, хресҫенсене хăй пĕлмен ыйту майĕпе ыйтса пĕлме вулама-

лли çурта пыма вĕрентес пулаҫ. Ҫухăн-вăтам хресҫен мĕнле кивçен укçа тупасси, йе ăçтан йӳнерех плук, аван вăрлăх, йе пĕр-пĕр сут ĕçĕ çинҫен пĕлменнине ыйтса пĕлме вуламалли çурта пыра пуçласан—вăл аванах пулаҫ. Çавăнпа вуламалли çуртăн хресҫене кирлĕ справкăсем пама та хатĕр пулас пулаҫ. Тĕрлĕ кĕнеке-справоҫнăксенҫен пуçне вуламалли çуртра хаçатра çапнă текретсем, инструктсисем, т. ы. те пулма тивĕçлĕ. Вĕсене— тупма çăмăлтарах пултăр тесе — хаçатран касса илсе, пĕр çĕре папккă ăшне пухас пулаҫ. Ăна хаçата пурте вуласа пĕтерсен анҫах касса илме йураҫ. Çав хаçатран касса илнисене кирлĕ ҫух ҫасрах тупма авантарах пултăр тесен, çапла уйăрса хурас пулаҫ: 1) çĕрпе вăрман йĕркисем çинҫен, 2) йалхуçалăх çинҫен, 3) налуксем çинҫен, 4) копператси çинҫех, 5) сут ĕçĕ çинҫен, 6) хресҫенĕн кил-çуртри пурăнăçĕ çинҫен (хут вĕренесси, ҫир-ҫĕртен тӳрленесси, т. ы. те), 7) ытти тĕрлĕ ĕçсем çинҫен.

Хресҫенĕн ыйтуне алă айĕнҫи справккăсемпе тĕпҫесе тĕплĕ пĕлме май çук пулсан, ун çинҫен, йе хаçатран, йе хулари хресҫен çуртĕнҫен çыруна ыйтса пĕлес пулаҫ. Пĕлнĕ-пĕлмен справккă нихçан та парас пулмасҫ, мĕншĕн тесен пĕрре йăнăш справккă парсан, хресҫен ĕненме те пăрахма пултараҫ. Хресҫенсем мĕнле йапаласем çинҫен ыйтса пĕлме пыннине çырса пырас пулаҫ: вăл çыру

тăрăх авантарах шутласа пăхсан, малалла мĕн çинҫен ытларах ыйтасси те курăнса тăма пулараҫ. Малалла курса тăни авантарах хатĕрленес ĕçре пулăшма пултараҫ.

Вуламалли çурт тавра хастарлă хресҫенсене ытларах пухма тăрăшас пулаҫ.

Хаçат тĕлешĕнҫен испаҫăн пысăк кирлĕ ĕçсем пит нумай. Çав ĕç йĕркисене епир çак сырура вăй çитнĕ таран каласа патăмăр. Хăш-хăш испаҫ çак тĕрлĕ ĕçсенҫен хăраса ӳкме те пултараҫ. Çакăнта каланă ĕçсене пурне те хăй пĕҫҫенех вырăна кӳме шухăшласан, вăл нумай ĕç тума тытăнĕ, анҫах пĕрне те тĕплĕ, аван, хресҫенсен кăмăлне килмелле тăваймĕ. Çавăнпа испаҫăн вуламалли çурт тавра хăйне пулăшма пултаракансене пуçтарма малтанах тытăнас пулаҫ. Ҫăнах та: хаçата пурте илтмелле вулама уҫиттĕле, йĕ йалти хресҫенсемпе çывăх пурăнакан ытти вĕреннĕ çынсене ҫĕнме йураҫ. Çав вăхăтрах лайăхрах хут пĕлекенсене хресҫенсем хушшинҫен те çав ĕçе тума вĕрентес пулаҫ. Хăш-хăш хресҫен патне ҫас-ҫасах—испаҫ пулăшмасăрах—кӳршисем хаçат вуланине итлеме пухăнкаласҫĕ. Çавăн пек вулакан хресҫенсене испаҫран пĕҫĕк пулăшу анҫах кирлĕ: мĕнле пулăшу кирлине çак вулакансемпе каласса, ыйтса пĕлме май пулаҫ. Вĕсенҫен хресҫенсем мĕн çинҫен тавлашнине, мĕн çинҫен пĕлесшĕннине ыйтса пĕлсе тăрас пулаҫ. Хăш-ҫух

испаҫăн—вуланине, хресҫенсем мĕн калаҫнине хăйĕн те пырса итлес пулаҫ. Çавăн пек малтан пыракан хресҫенсемпе пĕрлешсе, вĕсене вуламалли çуртран хресҫенсем хушшинҫи ĕçсене туса пыма вĕрентес пулаҫ.

Çтена хаçатне çырнă ҫух та испаҫăн пĕҫҫен анҫах ĕçлеме тăрăшас пулмасҫ. Хаçат валҫăи статйасем çыракан хресҫенсене пĕрлештерме тăрăшас пулаҫ. Çамрăксенҫен хаçата çыракансене, хаçат çине карттинккăсем ӳкерекенсене вуламалли çурт тавра пухма тăрăшас пулаҫ. Çтена хаçатĕнҫе ĕслекенсенҫен йалкор крушокĕ уçма та май пулаҫ. Çтена хаçатĕнҫен пуçласа, вĕсем хулара кăларакан пысăк хаçатсене çырма вĕренме пултараççĕ. Çав çтена хаçаҫĕпе хулари хаçатсем çине çыракансене (йалкорсене) крушока пĕрлештерсе, вĕсемпе пĕр майах ĕçлеме тăрăшас пулаҫ. Тĕрĕс, пулнă ĕçсем, сийенсем çинҫен суйĕçтермесĕр çырма вĕрентес пулаҫ. Йалти, вулăсри йăнăш ĕçсене сисҫĕр тесе, вĕсене пирĕн саккунсене вуласа пĕлтерме тăрăшас пулаҫ. Хаçатра çапнă йалкорсен статйисене пĕрле вулас пулаҫ, вĕсен йăнăш вырăнĕсем çинҫен, йе тата йепле авантарах çырасси çинҫен калаçтарас пулаҫ. Вуламалли çуртри ытти ĕçсене тума пулăшма та ҫĕнес пулаҫ (хаçат салатасси, хаçата сасăпа вуласси, т. ы. ĕçсем те).

Хресҫенсене справккăсем парас ĕçре те испаҫăн пĕҫҫен ĕçлеме йурамасҫ. Ку ĕçре йалти уҫрешенисенҫе ĕçлекенсене пулăш-

ма ҫĕнес пулаҫ. Çав пулăшакансенҫен справккă пӳровĕ орканисатсилесе, унăн ҫленĕсене ҫеретпе, справккăсем пама хушма май килет. Малтан вĕсене справккă парас ĕçре мĕнле ĕçлемеллине вĕрентес пулаҫ.

Çапла испаҫ вуламалли çурт тавра хастар, малтан пыракан вĕреннĕ çынсене, ҫухăн-вăтам хресҫенсене, йалти профсойус ҫленĕсене мĕн ҫул йышлăрах пухма пултарĕ, çавăн ҫул вуламалли çуртăн ĕçĕ те хресҫеншĕн çывăх пулĕ. Хресҫенсем те партти, Совет влаçĕ хушнă ĕçсене вăхăтра ăнланса пырĕç. Вара ҫухăнпа вăтам хресҫенсен пурăнăçне йусама та çăмăлтарах пулĕ.

IV. Вуламалли ҫуртра кĕнекепе мĕнле ĕҫлемелле.

Хаҫат вулакан ҫасах кĕнеке вулама та тытăнаҫ.

Халиҫҫен епир хаҫатпа ĕҫлесси ҫинҫен анҫах калаҫрăмăр. Анҫах хаҫат вулакан ҫын, вăл халиҫҫен ниҫта та вĕренмен пулсан та, хаҫат вуланăҫемĕн нумай йăпаласем ҫинҫен хаҫат ҫине ҫырнинҫен ытларах пĕлме тăрăшакан пулаҫ. Кирек мĕнле хаҫата та кĕске статьйасемпе ҫыраççĕ. Ҫас-ҫасах ҫав статьйасем мĕн ҫинҫен те пулсан тата авантарах пĕлес майпа ҫул анҫах кăтартма пултараççĕ. Хаҫатра курăк вăрлăхĕсем, йĕ хреҫене кирлĕ ытти йăпаласем ҫинҫен питĕ кĕскен каланă („Тăваш хреҫенĕ“—№ 11-23, март, 28 ҫ. пăх). Курăксем ҫинҫен халиҫҫен сахал пĕлекен хреҫенĕн ҫак статьйана вуласа пăхсан, ку курăксене мĕнле, хăш вăхăтра, мĕнле ҫĕр ҫине акмалли ҫинҫен пĕлесси килĕ. Вĕсене вăл курăксем ҫинҫен ҫырнă кĕнекене вуласа пăх-

сан анҫах тĕплĕ пĕлме пултараҫ. Çавăн пек ыйтусем тата ытти статйăсене вулана ҫух та йаланах сиксе тухаççĕ. Унтан тата хаçат вулакан кеокрафи картти тăрăх хуласем, çĕршывсем шыранăçемĕн çав çĕр-шывсем çинҫен кеокрафи кĕнеки вуласа, тата ытларах пĕлме тăрăшма пултараҫ. Хаçат вулана ҫух йут ҫĕлхерен илнĕ сăмахсене словар тăрăх вĕренсе пыни те кĕнеке вулама тытăнас ĕçе куçма пулăшаҫ. Çапла хаçата кунтан куна вулакан кирек мĕнле пулсан та, кĕнеке йенне туртăнма тытăнаҫ. Хаçат вулакансен шуҫĕ йалта мĕн ҫул ӳссе пырĕ, çавăн ҫул кĕнеке вулас текенсем те йышлăланĕç. Халиҫҫен вуламалли çуртран ҫылайĕшĕ кĕнекесене çамрăксем, ҫас-ҫасах шкула çӳрекен аҫасем анҫах илеççĕ, вĕсен хушшинҫе ватăрах ҫухăнвăтам хресҫенсем хĕрарăмсем пит сайра курăнаççĕ. Мене пĕлтерет-ши çакăн пек ĕç? Ку, йĕ вĕсен хушшинҫе хаçат вулакансем пит сахаллине кăтартаҫ, йĕ вуламалли çуртра çуллă хресҫенсене кирлĕ кĕнекесем çуккине пĕлтерет. Çавăнпа вуламалли çуртăн хаçат ĕçне сарса пынăçемĕн хресҫенсене хаçатран пуçне кĕнеке вулама вĕрентесси çинҫен те астуса тăрас пулаҫ, кĕнекене мĕнле вулама вĕрентесси çинҫен те пĕлсе тăрас пулаҫ.

Пиплиоттеккăн партти хушнă ĕçсене вырăна

Вуламалли çуртăн, унăн пиплиоттеккин, кĕнекисене хресҫенсем хушшине ытларах сарма тăрăшас пулаҫ. Çуллă

кӳресси ҫинҫен астуса ӗҫлес пулаҫ.

хресҫенсене пиплиоттекка кӗнеке илме пыма вӗрентес пулаҫ. Кунта каллех мӗнле кӗнекерен хресҫеншӗн мӗнле усӑ пуррине кӑтартса, хресҫенсене пӗлтерсе тӑрас пулаҫ. Хресҫенсем хушшинҫе мӗнле майпа кӗнеке сарасси ҫинҫен калиҫҫен, малтан—ҫи пирвай хресҫенсене мӗнле кӗнекесем парасси ҫинҫен кӗскен калас пулаҫ.

Пирӗн умра халӑ парттин 15-ш сӗесӗ кӑтартнӑ пысӑк ӗҫсем тӑраççӗ. Вӑл ӗҫсем ҫаксем: хулари рапоҫисемпе йалти ҫухӑнсене вӑтам хресҫенпе тата хытӑрах пӗрлештерсе кулакӑн йулашки пусмӑрне пӗтересси, ҫухӑнпа вӑтам хресҫенсене пурне те конпературси тавра пӗрлештересси; ҫухӑнпа вӑтам хресҫенӗн сапаланҫӑк, сахал усӑллӑ хуҫаллӑхӗсене ушкӑнлатса пысӑклатасси; ҫухӑн-вӑтам хресҫенсене, хӗрарӑмсене халӑх ӗҫне тума нумайрах, саттуртарах тытӑнтарса, килти пурнӑҫа та куҫӑттурлӑрах майлаштарасси; йут патшалӑхри пуршуй—улпутсем пире хирӗҫ вӑрҫӑпа килессе хатӗр кӗтсе тӑрасси. Ҫак партти хушнӑ, хресҫенсене пит кирлӗ ӗҫсем ӑнса пыҫҫӑр тесен, вӑл ӗҫсене мӗнле майпа ӑҫтан тытӑнса туламаллине пур хресҫенсене те ӑнлантарас пулаҫ. Ку ӗҫре пире кӗнеке тем тӗрлӗ пулӑшма пултараҫ: кӗнеке

ӷас-ӷасах çӑмӑллӑн, йлемлӗ, ӗçлӗ сӑмахсемпе каласа сахал вӗреннӗ çыншӑн та йӑвӑр ӑнлануллӑ йапалана çӑмӑллатса пама пултараҫ. Çавӑнпа вуламалли çуртри пиплиотеккӑн хайӗн мӗн-пур ӗçне пӗрмайах çак партти хушнӑ ӗçсене вырӑна куртме тӑрӑшас пулаҫ. Ытти пысӑк кампанисене ирттернӗ ӷух та (налук, советсене суйласси, т. ы.) çак, партти сӗнесӗ хушнӑ ӗçсемпе çыхӑнтарса пырас пулаҫ. Нумайӗшӗ—„ӑҫтан çителӗклӗ кӗнекесем илме пултарӑпӑр“,—тейӗç. Çак, партти хушнӑ ӗçсене тума йалти ытти уӷрештенисем те тытӑннӑ (кооператси, пулӑшу комиттеӷӗ йалсоветӗ, профсойуссем). Пиплиоттеккӑпа вуламалли çурт вӗсене авантарах пулӑшма пултарӷӑр тесен, вӗсен хӑйсен те пиплиоттекка кӗнекесем туйанма пулӑшас пулаҫ. Унпӑн вулӑсран, уйесрен, кӗпӗрнерен—йалтан йала çӳрекен пиплиоттеккӑсем ытларах ыйтас пулаҫ.

Токлатсем, выстӑвккӑсем, конкурссем тӑвас пулаҫ.

Вуламалли çуртӑн хрӗсӷенсене кӗнеке йенне çывхартма мӗнле майсем пур-ши? Пиплиоттеккӑра халӷхи ерне-уйӑх хушшинӷе хресӷенсене кирлӗ кӗнекесене кӑтартса тӑрас пулаҫ (выставкка). Мӗнле кӗнекесем кирлине пӗлес тесен, каллех хресӷенсем мӗн çинӷен ыйтнине, партин сӗнесӗ мӗнле кӑтартусем хӑварнине пӗлсе тӑрас пулаҫ. Çӑв кӗнеке выстӑвкки патнех мӗнле кӗнекене мӗнле кӗнеке хыççӑн вулама хушакан çыру çапас пулаҫ. Кӗскен мӗнле кӗ-

неке мĕн çинҫен каласа панине кăтартакан çыру çакма та йураҫ.

Хресҫенсем хăйсене мĕнле кĕнекесем кирлине пĕлҫĕр тесен, халăх хушшинҫе хаçат вуланă ҫух, халăх хушшинҫе кам та пулсан токлат тунă ҫух, йе пухусенҫе—пиплиотеккăра пур кĕнекесем çинҫен кĕскен каласа парас пулаҫ. Токлат тăвакансене (акроном, кооператси инструктăрĕ, çĕр йĕркелекен, т. ы.) токлат тунă майпа хресҫенсене мĕнле кĕнекесем вуламалли çинҫен те кăтарттарас пулаҫ.

Хресҫенсене—кирлĕ кĕнекесене вуласа тухнă хыççăн—хăйсене те кĕнекен усăлăхĕ çинҫен кĕскен çыртармалла. Çав çырусене, йе кĕнеке выстăвккинҫе çакса хумалла, йе çтена хаçатĕ çине çырас пулаҫ. Çак хресҫенсем хăйсен кăмăлне килнĕ кĕнекене вулама, йе çтена хаçатĕ урлă, йе пиплиоттеккăра çакăнса тăракан çыру урлă хăйсен йулташĕсене сĕнме пултараççĕ.

Пиплиоттеккăн кĕнекесенĕ алла парасран пуçне тата кĕнеке вулакансен пурăнăçне те сăнас пулаҫ. Кĕнеке вулакан хресҫенĕн килти пурăнăçĕ, йе унăн хуçалăхĕ кăшт та пулсан çĕнелет-и, аванланаҫ-и. Кĕнеке вуланăçемĕн йалта хăй пурнăçне улăштаракан хресҫенсем, хĕрарăмсем курăнакан пулсан, пиплиоттеккă ҫи аван вулакана тӳпма конкурс тума пултараҫ. Конкурса пĕр йапала çинҫен çыракан кĕнекесем тăрăх анҫах тăвас пулаҫ: кам тыр-пул тăвас ĕçе кăтартакан кĕнекесене

пуринҫен аван вулаҫ; кам ӑратлӑ выльӑх-ҫӗрлӗх ӳстересси ҫинҫен сырнӑ кӗнекесене пуринҫен аван вулаҫ, йе пӗрлешсе ӗҫлесси ҫинҫен, т. ы. те.

Хӗрарӑмсемшӗн конккурс кил-сурта, аҫа-пӑҫана таса тытасси; йе аван, тутӑ апат хатӗрлесси; йе хаклӑ мар, илемлӗ кӗпе-тумтир ҫӗлесси ҫинҫен тӑвӑс пулаҫ. Пирӗн пурӑнӑҫ мӗн тӗрлӗ нумай йенлӗ, ҫавӑн тӗрлӗ кӗнекесем пур, ҫӑвӑнпа йалта кӗнеке вулакансем пулсан, кирек хӑҫан та конккурс тума май пур. Ҫав конккурса ирттернӗ ҫух кӗнеке—ӑна вула пӗлсен—пирӗн пурӑнӑҫра мӗнле усӑ кӳнине кӑтартас пулаҫ. Кӗнеке пулӑшнипе хӑйсен пурнӑҫне аванлатма тытӑннӑ хресҫенсене хӑйсене те кӗнекесем ҫинҫен, мӗнле кӗнеке вулама тытӑнни ҫинҫен, мӗнле майпа пурӑнӑҫа улӑштарма тытӑнни ҫинҫен калаттарас пулаҫ. Ҫи аван вулакансене (кам хӑй хуҫалӑхне, йе килтаврашне кӗнеке хушнӑ пек пуринҫен аван майлаштарнӑ) конккурсра пӗр-пӗр парне парас пулаҫ. Пуринҫен ытла ҫак конккурс ҫинҫен, кама мӗншӗн парне панни ҫинҫен пӗтӗм йала пӗлтересшӗн тӑрӑшас пулаҫ.

Пиплиоттеккӑран кам пиплиоттеккӑран кӗнеке илсе тӑннине йаланах пӗлсе тӑрас пулаҫ. Ҫухӑнсем, патраксем, тата хӗрарӑмсем кӗнеке илме пит сахал пыраççӗ пулсан, вӗсен хушшинҫе хаҫат ҫинҫен те, кӗнеке ҫинҫен те хытӑрах ӗҫлеме тытӑнас пулаҫ. Кӗнеке илме

пыракансемпе, кĕнеке вулакансемпе вĕсем мĕн вуланни çинҫен, мĕнле ăнланни, мĕне ăнланайманни синҫен йаланах калаçса, пулăшас пулаҫ. Кĕнеке илекенсемпе пĕрмайах калаçмасан, кама мĕнле кĕнеке парасси çинҫен те пĕлме май çук. Кĕнеке вулама пуçлакансем пуртепе пĕрех хăйсене мĕнле кĕнеке кирлине пĕлеймеççĕ: вулама сĕре йăвăр кĕнеке илсен, кĕнекерен хăраса ӳкме те пултараççĕ. Пиплиоттеккăр кам мĕнле кĕнеке вуланнине, мĕне ăнланса çитейменнине курса тăрсан, сайра хутран пĕр йапала çинҫен çырнă кĕнеке вулакансене пĕрле пухса, çав йăвăр вырăнсене авантарах ăнлантарса токлат тума та пултараҫ.

Çапла кĕнеке тавра та хресҫенсем хушшинҫе пит нумай ĕçлес пулаҫ. Кунта та пиплиоттеккăр пĕҫҫен анҫах ĕçлесен, нумай çĕре унăн алли çитейес çук. Çак, кĕнеке вулакансен хушшинҫен йерипен кĕнекешĕн ĕçлеме хатĕр çынсене пиплиоттеккă тавра пĕрлештерес пулаҫ. Вĕсенҫен кĕнеке йулташĕсем йатлă крушок уçсан та йураҫ. Вĕсем хăйсен кӳршисемпе калаçса, хресҫенсене кирлĕ кĕнекесем, çинҫен пĕлтерме пултараççĕ, çĕнĕрен кĕнеке вулама тытăнакансене тупса, вĕсене пулăшма пултараççĕ. Конккурсем, йе кампанисем ирттернĕ ҫух пиплиоттеккăри ĕçсене те майлаштарма пултараççĕ. Йалта çавăн пĕк кĕнеке йулташĕсем нумай пулсан, ҫас-ҫасах лексисем, токлатсем лартма та çă-

хӗмӑлтарах пулӗ, вӗсене итлеме те йышлӑнр пухӑнӗç.

Кӗнеке вулама тытӑнакансене кирлӗ кӗнекесене тупса, вуласси ҫинҫен каласа парас пулать.

Хресҫенсем хушшинҫе кӗнекесем вулакансене кӗнеке тӑрӑх ӗçлеме вӗрентес пулать. Пуринҫен малтан кӗнеке вулакансене кирлӗ кӗнекене шыраса тупма хӑйсене вӗрентес пулать. Хӑй пӗлес килнӗ йапала ҫинҫен ҫырнӑ кӗнекесене тупма вӗренсен, кӗнеке вулакан хресҫенсем мӗнле кӗнеке алла лекнӗ ҫавна вулама пӑрахӗç. Вара кӗнекене ахаль ларнӑран мар, кӗнекере пулӑшу тупасшӑн вулӗç. Кӗнекере мӗн ҫинҫен ҫырнине пӗлес тесен, ӑна пӗтӗмпех вулас пулмасть. Кӗнекен тупмаллине ҫеç вуласа тухас пулать, унтан умӗнхи сӑмаха, хӑш ҫух тата хӑвна пуринҫен ытла кирлӗ йапаласем ҫинҫен ҫырнӑ ӳӗрӑмсене вуламалла. Ҫак кӑтартнӑ вырӑнсене пӑхса тухсан, кӗнеке мӗн ҫинҫен мӗнле каланине, ӑна вуласан усси пулнипе пулманнине кирек хӑҫан та курма пултаратӑн. Унтан тата ҫав кӗнеке ҫинҫен ҫырнӑ ретсенҫийе вуласа тухас пулать. Кашни пиплиоттеккӑн хӑй кӗнекисем ҫинҫен ҫырнӑ рестенҫисене алӑ айӗнҫе тытас пулать. Ҫав ретсенҫисене, йе кӗнеке пуҫламӑшне, йе кӗнеке хыҫне ҫыпӑҫтарса хурсан тата аванрах. Кӗнеке вулакансене хаҫат ҫинҫе мӗнле ҫӗнӗ кӗнекесем ҫинҫен мӗнле ретсенҫисем ҫырнине вулама ҫӗнес пулать. Вара хресҫен-

сем ытларах кĕнекесем çинҫен пĕлсе тăракан пулĕç, вĕсене хăйсем пĕлес килнĕ йапаласем çинҫен çырнă кĕнекесене тупма та çăмалтарах пулĕ. Халĕ хăй пĕҫҫен килте вĕренекенсене пулăшас йĕркепе çырнă прокрамсем те нумай. Вăл прокрамсенҫе мĕн çинҫен мĕнле йĕркепе вуласси çинҫен пуçне мĕнле кĕнекесем вуласси çинҫен те çырнă. Кĕнеке вулакан хресҫенсене çав прокрамсенҫе çырнă кĕнекесене те тупма вĕрентес пулаҫ.

Кĕнекене вуланă ҫух ăна çыракан мĕн çинҫен пĕлтĕрес тенине, мĕне вĕрентесшĕннине курма вĕренес пулаҫ. Кĕнеке çыракан çав хăйĕн ҫи аслă шухăшĕсене вулакана авантрах кăтартас тесе, ăна ĕнентерес тесе, кĕнеки çине ҫысласем, оппăтсем, йе примесем, йе ҫаплă, вĕреннĕ çынсен сăмахĕсене кӳртет. Вуланă ҫух çыраканăн çав аслă, унăн ҫи кирлĕ шухăшĕсене анҫах астума тăрăшас пулаҫ. Кĕнекери кашни сăмаха астума кирлĕ мар: вăл пуçа-тăна анҫах ывăнтараҫ. Кĕнекери çав шухăшсене халиҫҫен хăв пĕлнĕ шухăшсемпе танлаштарса пăхас пулаҫ: кĕнекере каланă пекех пĕлсе тăраттăнҫҫĕ-и, йе урăхла-и; кĕнекере саншăн мĕнле çĕнĕ, халиҫҫен пĕлмен, илтмен шухăшсем пуррине сăнас пулаҫ. Çав кĕнекери çĕнĕ шухăшсене авантарах астăвас тесен, вĕсене кĕскен хут çине çырас пулаҫ. Кĕнеке вуланă ҫух хут çине нумай, вăрăм çырас пулмасҫ: ун пек çырăва кайран вулама вăхăт кĕнекине вулас ҫухлах кирлĕ. Питĕ

кĕскен çырма вĕренес тесен, кĕнекене çыракан̆ан ҫи аслă, вирлĕ шухăшĕсене сăнаса тупма вĕренес пулаҫ. *)

Кĕнекене вулană ҫух йăвăр, ăнланайман вырăнсене, йе кĕнекери санăн кăмăлна кайман шухăшсене те хут çине кĕскен çырса илес пулаҫ. Кайран кĕнекери çав вырăнсем çинҫен пĕлекен çынсенҫен йытса пĕлме тăрăшас пулаҫ. Ун пек вырăнсене пысăк словарсем вуласа та ăнланма май пур. Кĕнекене вулană майпах кĕнекен мĕнле шухăшĕсене, мĕнле вĕрентнисене хамăр пурăнăçра мĕнле вырăна кӳме май пурри çинҫен те шухăшлас пулаҫ. Хамăр тавра çав кĕнекери шухăшсене ĕçе кӳнĕ вырăнсем çук пулсан, вĕсене мĕнле вырăна кӳни çинҫен хаçат урлă, йе урăх кĕнекесем урлă ыйтса пĕлме тăрăшас пулаҫ.

Çапла, кĕнекери çĕнĕ шухăшсене вуласа пĕлесси çеç мар, вĕсене пĕҫĕккĕн, йеринен хамăр пурăнăçра та вырăна кӳме тăрăшас пулаҫ. Çапла вуласан анҫах кĕнеке пурăнăçа çăмăллатма, малалла йама пултараҫ.

Кĕнекери шухăшсене вулană çух хăв мĕнле ăнланни çинҫен пĕлес тесен, вĕсене ыттисене каласа пама тăрăшас пулаҫ. Вăл шухашсем çинҫен ыттисем мĕнле шухăшлани çинҫен пĕлме тăрăшас пулаҫ. Çавăнпа ытти

*) Кĕнеке вулакансене кĕскен çырма мĕнле вĕрентесси синҫен испаҫăн, йе пиплиоттеккăрăн çак çырăвăн вĕçĕнҫе кăтартнă кĕнекесене вуласа пĕлес пулаҫ.

çынсемпе калаçни, тавлашни кĕнеке-хаçат вулана ӷух питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен вăл тавлашура ӷас-ӷасах халиӷӗн пĕлмен, сăнаман ĕçсем, йапаласем çинӷен астутараççĕ, халиӷӗн пуçа пырса кĕмен шухăшсем те сиксе тухма пултараççĕ. Каласа пани итлекенсемшĕн те усăллă, саншăн та (вулаканшăн) усăллă: вĕсем кĕнекери шухăшсене пĕлӗĕç, есĕ вăл шухăшсене тата ытти йенӷен те сăнаса виçсе пăхрăн, вĕсене тата авантарах ăнлантăн.

Çав тавлашусем, ушкăнлă калаçусем кĕнекери мĕнле шухăшсене пурăнăçа мĕнле майпа вырăна кӳмелли çĕнĕ çулсем те кăтартма пултараççĕ. Кĕнекери хресӷенсене кирлĕ йапаласем çинӷен кĕскен çтена хаçаӷĕ çине çырма та йураҫ. Кĕнекене вуласа тухсан, ун çинӷен çырнă ретсенçийе каллех тепĕр хут вуласа тухас пулаҫ. Вулана кĕнеке çинӷен хăв мĕнле шухăшланине ретсенçи çыраканăн шухăшĕсемпе танлаштарса пăхас пулаҫ.

Кĕнеке вулама тытăнаканăн кĕнекере мĕн çырнине пурне те ĕненес шухăша пăрахма тăрăшас пулаҫ. Кĕнекери шухăшсене, ӷысласене авантарах сăнас пулаҫ, ӷысласем çыраканăн шухăшĕсемпе пĕр май пынине танлаштарса пăхас пулаҫ. Кĕнекĕсем нумайрах вуланăçемĕн вулакан кĕнекери шухăшсене авантарах сăнама, кĕнекери йăнăш вырăнсене курма вĕренсе пыраҫ. Çавăнпа кĕнеке вулама хăнăхнă хресӷенсене пĕр вăхăтрах темиçе

кĕнеке тăрăх ĕçлеме вĕрентес пулаҫ. Пĕр йапалапа пĕр ĕç çинҫенех çырнă темиçе кĕнеке тупма пулаҫ. Пĕр кĕнеки пĕр йенҫен кăтартаҫ, тепĕр кĕнеки тепĕр йенҫен çыраҫ, виççĕмĕш кĕнеки тата çĕнĕ шухăшсем кăтартма пултараҫ, пирвахисен шухăшĕсене хирĕç каласа çырма та пултараҫ. Çапла, пĕр йапала çинтен темиçе кĕнеке вуласан, хăвна кирлĕ йапалана пур йенҫен те пĕлсе тăма пултаратăн.

Испаҫăн, йе пиплиоттеккăрăн ĕçлемеллин çакăнта кăтартнă майсене, пур кĕнеке вулакăн хреҫенсене те йерипен каласа ăнлантарас пулаҫ. Çавăнпа кĕнеке вулакансемпе пĕрмайах ĕçлес пулăҫ, вĕсене хăв куç умĕнҫен çухатас пулмаҫ. Кĕнеке вулакан хресҫенсене çывхарма, вĕсене пулăшма май тупасси çинтен йаланах шухăшлас, вĕренес пулаҫ.

* *
*

Ҫăвашсем хушшинҫе халь те кĕнеке-хаçат вулас ĕçе ĕç вырăнне хумаççĕ. Çавăнпа хăшхăш çĕмĕре кĕнеке-хаçат вулакан çамрăксем вуласа ларма ҫасах хăйаймаççĕ те, мĕншĕн тесен аслисем — „ахал лариҫҫен тытăн-ха çăпата хуçма“ теме те пултараççĕ. Çакăн пек шухăшсене ҫăвашсем хушшинҫен ҫасрах çăлса кăларма тăрăшас пулаҫ. Çавăнпа кĕнеке-хаçатăн уссине ҫасрах пĕтĕм ҫăваш хресҫенĕсене кăтартма васкас пулаҫ. Унтан тата вуламалли çуртăн пĕрмайах кĕнеке-хаçат ву-

ласси ытти ĕçсенӗен çăмăл ĕç марри çинӗен, кĕнеке-хаçат вулама вĕренмелли çинӗен калаçса та, çыру урлă та пурне те анлантарма тăрăшас пулаҫ. Кĕнеке-хаçат вуласси çинӗен вуламалли çурта çакăн пек плаккат çырса çапсан аван пулаҫ:

«Кĕнеке-хаçата ахалӑ, ĕçсĕр ларнăран мар—авантарах ĕçлеме, лайăхрах пурăнма вĕренес тесе вулас пулаҫ.»

«Кĕнеке-хаçат вуласси ытти ĕçсем пекех — пысăк, кирлĕ ĕç.

Çавăнпа:

1. Вулама уçă пуçпа лар.
2. Пӳртре уçă сывлăш пултăр, кăшкăру ан пултăр.
3. Пĕр ларсан ăнланми пулиҫҫенех ан вула: кашни 1—2 сехетрен кăшт кан.
4. Выртса ан вула: куçна пăсăн.
5. Наӷар çутăпа ан вула.
6. Вулана ӷух кукăрăлса ан лар.
7. Вулана ӷух кĕнекӳн çӳл йенне кăшт çĕкле.

* * *

Испаӷăн, пиплиоттеккăрăн çак кĕнекесене вуласа пăхас пулаҫ.

1. В. А. Невский. Работа с газетой и журналом. 1925 г. Цена 75 коп.
2. В. А. Невский. Как находить нужную книгу и как с ней работать. ГИЗ. 1927 г. Ц. 65. к.

3. Сычев. Как читать книгу и газету. Воен. Вестник. 1927 г. Ц. 60 к.
4. Лобовский А. Стенная газета. Новая Москва 1924 г. Цена 45 к.
5. Эльский Б. Стенные газеты и их организация. МГСПС. 1924 г. Ц. 35 к.
6. Ребельский. Азбука умственного труда. МГСПС. 1927 г. Ц. 75 коп.

СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ ПАРТТИ ЂЛЕНЬСЕМПЕ КОМСОМОЛĔССЕМ, ТАТА АКТИВЛĂ ХРЕСЂЕНСЕМ ВАЉЉИ

Çакăн пек кĕнекесем кăларнă:

Волин — 12 пиокрафи. 55 стр., 25 пус.

Быстров — Турă пур-и çук-и, I-мĕш пай. 46 стр., 25 пус.

Унăнах „ „ „ II-мĕш пай. 30 стр., 16 пус.

Унăнах „ „ „ III-мĕш пай. 63 стр., 40 пус.

Фрунзе пиокрафийĕ. 24 стр., 25 пус.

Шестаков — Окт̆апĕр ревољутсийĕ хресђенсене мĕн пађĕ. 28 стр., 25 пус.

Ярославский — Ленин хĕрарăма пусмăрлăран хăтарасси çинђен 13 стр., 12 пус.

Кузнецов — Ленинпа хресђенсем. 53 стр., 30 п.

Зиновьев—Рапођђи класпа хресђенсем. 52 стр., 30 пус.

Елизаров — Парттин XV-мĕш сйесĕ мĕнле çул кăтартса хăварђĕ. 55 стр., 20 пус.

Вирганский — Комсомолĕссен политђиткисем, I-мĕш пай. 53 стр., 40 пус.

Унăнах — Комсомолĕссен политђиткисем, II-мĕш пай. 40 стр. 30 пус.

Унăнах — Комсомолĕссен политђиткисем, III-мĕш пай. 73 стр., 40 пус.

Рыклин — Парттин XV-мĕш конферентсийĕ мĕн йышăннă. 49 стр., 30 пус.

Совет Сойусĕн тупăшĕсемпе расхуђĕсем. 29 стр., 5 пус.

Комсомол уставĕ. 48 стр., 10 пус.

Быстров — Тĕне хирĕç пропокантă тăвакан крушоксен прокрамĕ. 22 стр., 20 пус.

Сергеев — Советсен Сотсиалисăмлă Респуплĕкĕсен Сойусĕ. 66 стр., 40 пус.

В. Краснов – Епир вăрçасшăн мар, анҫах хамăр сĕр-шыва сыхлама хатĕр. 33 стр., 15 нус.

Новаковский — Вунă çул. 93 стр., 45 пус.

Парттин XV-мĕш сĕесĕн ресоҫутсийĕсемпе постановленийĕсем. 112 стр., 30 пус.

Диманштейн—Парттин XV-мĕш сĕесĕпе унăн постановленийĕсем. 82 стр., 25 пус.

Т. Шибайло — Парттин XV-мĕш сĕесĕ йалта ĕçлесси çинҫен мĕн каларĕ. 58 стр., 15 пус.

Кутяшов — Ҫăвашсен хушшинҫе тĕне хирĕç пропокантă тăвасси. 52 стр., 20 пус.

Е. Зайцев — Комсомол йалхуçалăхĕнҫе. 65 стр., 15 пус.

Липилин — Совет влаçĕ çĕнĕ пурнăç йепле тăваҫ. 148 стр., 95 пус.

Б. Зорин — Хĕрлĕ çарăн вăй-хăваҫĕ мĕнрен килет. 36 стр., 12 пус.

Каганович—ПСК(п)П йепле йĕркеленсе тăраҫ. 93 стр., 30 пус.

И. Павлов — Ҫăваш çамрăкĕсене комсомолăн VIII-мĕш сĕесĕ çинҫен. 64 стр., 20 пус.

И. Сталин — Сылтăм сулăнҫăк хăрушăлăхĕ çинҫен. 21 стр. 10 п.

И. Павлов — Йалти комсомолĕс ĕç çулĕ. 100 стр., 25 пус.

Çитес çур уйăх хушшинҫе çакăн пек кĕнекесем çапансă тухаççĕ:

Сылтăм сулăнҫăкпа çураçулăхпа кĕрешер. (2 п.л.)

Волесевич — Комуниссен парттин ҫи кĕске историйĕ. ($11^1/_2$ п. л.)

Б. Васильев. — Комунасла Интернатсионалăн VI-мĕш конкресĕн ĕçĕсемпе решшенийĕсем (2 п. л.)

КĔНЕКЕ ИЛЕС ТЕКЕНСЕМ УКҪА ÇАК АТРĔСПА ЙАРĂР:

Москва, Центр, Никольская, 10,
Торговому Отделу Центриздата.

Ханĕ 18 пус

Цена 18 коп.

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

И. ИСАЕВ. Работа избы-читальни с газетой и книгой.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР
МОСКВА, ЦЕНТР, НИКОЛЬСКАЯ, 10